Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

76 (7930) № * Шăмат кун, 2011 çулхи октябрь (юпа) уйăхĕн 1-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## «Килĕшӳллĕ пурăннипе çуклăха туймарăмăр»

**Ялти сумлă ватăсем**

Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Екатерина Ивановнăпа Антон Архипович Архиповсем 36 пине яхăн çынлă районăмăрăн пĕр пайĕ кăна. Анчах пĕр пай пулсан та, çирĕп пай. Çапла калани – малалла-хи сăмахăмăн никĕсĕ. Кунта сывă пурнăç йĕрки те, вăрăм пурнăç тилхепи те, тарăн тымарлă таса юрату та.

Ятман ялĕнче пурăнакан сăн ӳкерчĕкри ветерансене пĕрре пăхсах 80-82 çул параймăн та. Çул хисепĕ çавăн чухлине пĕлсен ветерансем çамрăклăха епле ку-таранччен упраса хăварни пирки ыйту çуралчĕ.

– Ĕçлемелле, умри ĕçе чуна парса пурнăçламалла, юратса тунă ĕç ĕмĕре тăсать, çамрăклăха упрать. Ĕçленипе пĕрлех эрех-сăраран аякра тăни те пирĕн пурнăçăмăрта яшлăха тăснин тĕп вăрттăнлăхĕ пулчĕ-тăр. Эпир 2 ывăл çуратса ӳстертĕмĕр те паян вĕсен çемйисем, мăнуксем пирĕн пурнăçа илем кӳреççĕ, – пурнăç тути-масипе самаях кушăрханă пит çăмартисене кулă кăларса калаçать чӳк уйăхĕн 7-мĕшĕнче 80 çул тултаракан Екатерина Ивановна.

Çĕнелсе пыракан ял сăн-сăпачĕпе, пурнăçа ял ĕçĕнче тата халăх хуçалăхĕн тĕрлĕ отраслĕсенче пĕр кун юлмасăр ĕçлесе ирттернĕ ветерансем епле пурăннипе паллашас тĕллевпе çитсе чарăнтăм Архиповсен килĕ умне. Кĕрхи йĕпе-сапана пула пылчăклă урамран çак тĕлле иртсенех кил хуçисем тирпейлĕх ыйтăвне тĕпе хурса пурăнни палăрчĕ. Профнастилпа çавăрнă кил хапхи умĕ симĕс кукăрпа витĕннĕ. Тирпейлĕ ăсталанă пĕчĕк алăка уçса кил картишне утăмласан та урасем çерем çине пусрĕç.



(Вĕçĕ 5-мĕш стр.).

**Паян – Ватă çынсен кунĕ**

**ХИСЕПЛĔ ПЕНСИОНЕРСЕМ, ВĂРÇĂ ТАТА ĔÇ ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Пĕтĕм тĕнчери Ватă çынсен кунĕ ячĕпе чи ăшă кăмăлтан саламланине йышăнсамăр!

Халăхăн йăли-йĕркин шанчăклă управçисем, пурнăçри паха опытпа ăс-хакăл çăл-куçĕ пулнă май эсир республикăн ылтăн фончĕ шутланатăр. Истори тапхăрĕсене вĕçевĕçĕн татăлми çыхăнтарса хăвăрăн аслă та тарăн пĕлĕвĕре çамрăк ăрăва паратăр, суйласа илнĕ ĕçе чунтан юратма тата чи пĕлтерĕшли – çамрăксене ĕненме вĕрентетĕр, ăна çемьере сыхласа упратăр, çирĕп ĕненӳ вара çынна мĕн пур йывăрлăха çĕнме тата тулли те телейлĕ пурнăçпа пурăнма пулăшать.

Паянхи Чăваш Ен тивĕçлипе мухтанакан чылай япалана эсир тунă тата килес ăрусемшĕн шанчăклăн сыхласа хăварнă. Вĕсен шутĕнче: промышленноçăн пысăк предприятийĕсемпе архитектура палăкĕсем, автомобиль тата чукун çулсем, пурăнмалли микрорайонсем. Эсир ырми-канми тăрăшнăран вăрçă хыççăнхи çулсенче ял хуçалăхĕ вăй илсе тĕрекленнĕ, республикăра пĕрремĕш трактор туса кăларнă, йĕркеллĕ пурăнма майсем туса хунă.

Эпир сирĕн çитĕнĕвĕрсемпе чун-чĕререн хавхаланатпăр, сиртен тĕслĕх илетпĕр, пурнăçри хастарлăхшăн савăнатпăр.

Пенсионерсемпе ветерансене пур енлĕн пулăшасси тата аслă ăрушăн кирлĕ пек тăрăшасси – республикăн патшалăх политикин тĕп çул-йĕрĕ. Чăваш Енре ватă çынсене пулăшу пама уйăракан укçа-тенкĕ калăпăшĕ çулсерен пысăкланать, пенсионерсен виçи ӳсет, ятран паракан социаллă программăсем пурнăçланаççĕ. Ватă çынсен пурăнмалли пурнăç условийĕсене лайăхлатас, вĕсене медицина пулăшăвĕ парас тата эмелсемпе тивĕçтерес ĕçсене малалла та тивĕçлĕ шайра туса пырăпăр.

Сире пĕтĕм кăмăлтан çирĕп сывлăх, чун канăçлăхĕпе вăрăм ĕмĕр, пурнăçа савма, çывăх çыннăрсен чун ăшшипе юратăвне туллин туйма сунатăп. Ырлăх та телей сире!

**Чăваш Республикин Президенчĕ М. ИГНАТЬЕВ.**

**ХИСЕПЛĔ ĔÇПЕ ВĂРÇĂ ВЕТЕРАНĔСЕМ, ТЫЛ ĔÇЧЕНĔСЕМ, ХАКЛĂ ВАТĂСЕМ!**

Сире Пĕтĕм тĕнчери Ватă çынсен кунĕ ячĕпе ăшшăн саламлатăп.

Çăмăл килмерĕ сирĕн пурнăçăр. Сирĕнтен чылайăшĕ Аслă Отечественнăй вăрçăра Тăван çĕр-шыв ирĕклĕхне хӳтĕленĕ. Аслă Çĕнтерĕве çывхартассишĕн тылра ырми-канми вăй хунă ватă çынсем, ир пуçласа сĕм çĕрлеччен аслисемпе тан ĕçленĕ, мĕн пĕчĕкрен вăрçă асапне хăйсем çинче чăтса ирттернĕ «вăрçă ачисем» те сахал мар районта. Кайран та канăç мĕнне курман эсир. Халăх хуçалăхне ура çине тăратассишĕн тимленĕ. Сирĕн паттăрлăхăра, пархатарлă ĕçĕре пула ĕнтĕ паян эпир çакăн пек мирлĕ ĕçре вăй хуратпăр. Тавах сире пире телейлĕ пурнăç парнеленĕшĕн. Сирĕн пуян опытăра, эсир вĕрентнине эпир ялан асра тытатпăр. Вĕсем пире ĕçре пулăшса пыраççĕ. Йывăрлăхсене çĕнтерсе эпир те малалла çирĕп утăмсемпе утма тăрăшатпăр.

Паян та эсир район пурнăçĕпе кăсăкланса тăратăр, унăн пуласлăхĕшĕн сунатăр. Ачасемпе çамрăксемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăратăр. Тата нумай çул çапла пире савăнтарса пурăнăр.

Хаклă ватăсем! Сывлăхăр чир-чĕр мĕнне ан пĕлтĕр, кунçулăр вăрăм пултăр. Ватлăхăр канлĕ килтĕр, çывăх çыннăрсем яланах çума пулччăр.

**Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. ИВАНОВ.**

## Суйлав кампанийĕ вăй илет

**Суйлав ыйтăвĕсемпе**

***2011 çулхи декабрĕн 4-мĕшĕнче республика территорийĕнче черетлĕ суйлав иртмелле. Раççей Федерацийĕн Федераллă Пухăвĕн Патшалăх Думин депутачĕсемпе Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсене суйламалла пулать. Икĕ суйлав пĕрле иртнĕрен ыйтăвĕсем те ытларах. Çавна май çитес суйлав пирки тĕплĕнрех Муркаш территори суйлав комиссийĕн председательне, район администрацийĕн пуçлăхĕн çумне, йĕркелӳпе кадрсен, право енĕпе тивĕçтерессин тата вырăнти самоуправлени органĕсемпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхне Лилия Юрьевна ТАРАСОВĂНА каласа пама ыйтрăм.***

– Саккун кăларакан икĕ органăн кăçалхи пĕрлехи суйлавĕ – пĕрремĕш. Ытти çулсенче вĕсене яланах уйрăм ирттернĕ. Çавăнпа та суйлав комиссийĕн ĕç калăпăшĕ те унччченхинчен анлăрах пуласси паллă. Çапах та палăртнă пур ĕçсене те саккунпа килĕшӳллĕн тата хăй вăхăтĕнче туса ирттерме майсем çителĕклĕ.

Малтанах Патшалăх Думин депутачĕсене суйласси пирки. Суйлавçăсемшĕн кунта ытлашши темех ăнланмалла марри пулмалла мар. Патшалăх Думине пĕтĕмпе 450 депутат суйланă. Депутатсене пропорциллĕ суйлав системипе (парти спискĕпе) суйлаççĕ. Пĕтĕм Чăваш Республики пĕр регион ушкăнне кĕрет. Ку е тепĕр парти суйлавра пĕтĕмĕшле миçе сасă пухнинчен мандатсен шучĕ мĕн чухлĕ пуласси килет.

Республика Патшалăх Канашне 44 депутат суйламалла пулать. Вăл шутран 22 депутата парти спискĕсемпе (тепĕр майлă каласан пĕрлехи суйлав округĕпе) суйлăпăр. Тепĕр 22 депутатне пĕр мандатлă суйлав округĕсемпе суйламалла пулать. Урăхла каласан ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсене суйласси пирки алла икĕ бюллетень парĕç.

Пĕрлехи суйлав округĕпе депутата суйлама кандидата тăратнисен списокĕнче 9 çынран кая мар тата 47 çынран ытла мар пулмалла. Кандидатсен списокне пĕтĕмĕшле республика пайĕ тата кандидатсен пĕр мандатлă суйлав округне тивĕçекен регион ушкăнĕ çине уйăрма тивĕç. Муркашпа Элĕк районĕсем пĕр мандатлă 8-мĕш суйлав округне кĕреççĕ.

Çынсем хăйсене хăйсем те кандидата тăратма пултараççĕ е вĕсене суйлав пĕрлешĕвĕ (политика партийĕ е унăн регионти уйрăмĕ) кандидата тăратать. Кандидата тăратасси сентябрĕн 14-мĕшĕнче пуçланчĕ, октябрĕн 14-мĕшĕнче 18 сехетре вĕçленет. Кандидата уйрăм çынна пĕр вăхăтрах парти спискĕпе те, çавăн пекех пĕр мандатлă суйлав округĕпе те тăратма пултараççĕ. Анчах та ăна пĕр вăхăтрах темиçе суйлав округĕнчен кандидата тăратма пултараймаççĕ.

Суйлава пĕтĕмпе 7 политика партийĕ хутшăнать. Хальхи парламентри партисене (Раççей Патшалăх Думинчи «Пĕрлехлĕ Раççей», «Тĕрĕслĕхшĕн тăракан Раççей», ЛДПР тата КПРФ партисем) алă пуснисем пуçтарассинчен хăтарнă. Ытти партисен («Яблоко», «Раççей патриочĕсем», «Тĕрĕс ĕç») хăйсем сĕннĕ кандидатсемшĕн суйлавçăсем алă пуснисене пухас пулать. Хăйсене хăйсем кандидата тăратнисен те суйлавçăсен алă пуснисене пухмалла. Пĕрлехи суйлав округĕпе кандидатсен парти списокне регистрацилеме 9891 çын алă пусса пани кирлĕ. Пĕр мандатлă суйлав округĕпе кандидата регистрацилеме округа кура 407 çынран пуçласа 493 çын таран алă пусмалла.

Кандидатсен суйлав умĕнхи агитаци тапхăрĕ вĕсене регистрациленĕ вăхăтран тытăнать. Массăллă информаци хатĕрĕсенче вара агитаци ноябрĕн 5-мĕшĕнчен пуçланать. Унччен суйлавçăсене суйлава хатĕрленесси епле пыни, политика партийĕсемпе кандидатсен ĕçхĕлĕ пирки пĕлтерме юрать. Анчах та суйлав умĕнхи агитаци материалĕсем пулмалла мар. Кирек епле агитаци те 2011 çулхи декабрĕн 3-мĕшĕнче 0 сехетре вĕçленмелле.

Чăваш Республикин пиллĕкмĕш созыври Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавне ирттерме республика бюджетĕнчен 34 миллион тенкĕ ытла уйăрнă. Пĕр мандатлă суйлав округĕсемпе депутата суйлама тăратнă кандидатсем те, пĕрлехи суйлав округĕпе кандидатсен спискĕсене сĕннĕ суйлав пĕрлешĕвĕсем те ятарлă суйлав счечĕсем уçма тивĕç. Суйлав кампанине финанслассине çав счетсем урлă туса пымалла.

**В. ШАПОШНИКОВ калаçнă.**

**Инженерсемпе механизаторсем валли**

## «Ферма» операци иртет

Патшалăх техника надзорĕ пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе уйрăм çынсен килти хушма хуçалăхĕсенче трактор техникипе епле усă курнине тĕрĕслесех тăрать.

Чăваш Республикин хăй тĕллĕн çӳрекен тата ытти техникăна тĕрĕслесе тăракан патшалăх инспекцийĕн пуçлăхĕ В. Димитриев авăн уйăхĕн 26-мĕшĕнче 2011 çулхи юпа уйăхĕн 3–21-мĕшĕсенче республикăри вылăх-чĕрлĕх фермисенче «Ферма» профилактика операцийĕ ирттересси пирки приказ кăларчĕ. Гостехнадзор инспекцийĕ вылăх-чĕрлĕх фермисен тĕлĕшпе уйăракан тимлĕх мĕнпе çыхăннă-ха?

Ĕç хăрушсăрлăхĕн степенĕпе вылăх-чĕрлĕх отраслĕ агропромышленность производствинче малтисен ретĕнче. Пысăк инкексем тислĕк кăларакан, вылăх апатне пăспа тата шывпа пĕçерекен агрегатсем патĕнче пулса иртеççĕ. Кунпа пĕрлех фермăра ĕçлекен тракторсемпе хăй тĕллĕн çӳрекен машинăсем те час-часах усă курнине ӳстереççĕ. Çавна пула фермăсенче суранланакансемпе ытти инкек тӳсекенсен йышĕ пĕчĕк мар.

Тракторсемпе, прицепсемпе, ытти хăй тĕллĕн çӳрекен машинăсемпе, фермăри оборудованипе усă курнă чух техника тĕлĕшпе çирĕплетнĕ йĕркесене пăхăнса ĕç хăрушсăрлăхне тивĕçлĕ йĕркере тытнине пăхасси – «Ферма» профилактика операцийĕн тĕллевĕ. Тĕрĕслевсем вăхăтĕнче фермăсенче усă куракан тракторсемпе прицепсем патшалăх техника тĕрĕслевне тăнине, вĕсемпе механизаторсем йĕркене пăхăнса усă курнине пăхасси тĕп вырăнта пулĕ.

**С. НИКОЛАЕВ,**
**патшалăх техника надзорĕн районти инспекторĕ.**

# Кил тата хушма хуçалăх



Хамăр продукципе – пасара

## Вырăн çителĕклĕ пулĕ-и?

*Тĕрлĕ тавар туянма халăх пасара йышлă çӳрет. Кунта мĕн кирли йăлтах пур: апат-çимĕç, хуçалăхра кирлĕ тĕрлĕ япала тата ытти те. Чăнах та пасар тавар туянаканшăн питĕ меллĕ темелле, хакĕ пирки те сутуçăпа калаçса татăлма пулать. Анчах çакăнта пĕр япала питĕ пăшăрхантарать. Никамшăн та вăрттăнлăх мар, хушма хуçалăхра туса илнĕ экологи тĕлĕшĕнчен таса та пахалăхлă продукцие хамăр куллен каллĕ-маллĕ утакан, хăшĕ-пĕри çавăнтах чĕлĕм тĕпĕ пăрахакан тата ытти енĕне япăхтаракан çул çинчен туянма тивет. Унта тĕрлĕ çырла, пан улми, çăмарта, кăмпа тата ыттине сутаççĕ. Эпĕ ку ӳкерчĕке куллен курнипе, çынсен пăшăрханăвне тĕпе хунипе Муркаш пасарĕпе çыхăнтартăм.*

*Пирĕн Президент М.В. Игнатьев вара Чăваш Республикинче туса илнĕ продукцие халăх умне ытларах кăларма, унпа чылайрах суту-илӳ тума сĕнет. Апла пулсан мĕншĕн-ха пирĕн пасарта хамăр туса илнĕ апат-çимĕç валли сĕтелсем çителĕксĕр, тен вĕсен хакĕсем сутуçăсене тивĕçтермеççĕ? Çак ыйтусен хуравне тупма Муркаш пасарĕн ертӳçипе Евгений Николаевич Субботинпа калаçас терĕм.*



– Пасара харпăр хăй хуçалăхĕнче туса илнĕ продукципе халăх ытларах тухни питĕ кăмăллă. Хамăр çĕр çинчи апат-çимĕç пысăк пахалăхлă, çавна май унпа нумайрах усă курма тăрăшмалла.

Чăнах та хамăр утакан çул çинче апат-çимĕç продукцийĕпе суту-илӳ туни пулкалать, ăна пирĕн çитменлĕх тейĕпĕр. Тĕрĕссипе вара «Калач» çăкăр лавкки çумĕнче апат-çимĕç сутма ятарлă виткĕчлĕ сĕтел уйăрнă. Хăшĕ-пĕри куллен сĕт-çу, ашпăш тата хăш-пĕр продукта унта сутать, вĕсенчен туянма та кăмăллă. Хăш чухне вăл сĕтел çурма пушă та пулать. Паллах кашнинче кашни сутуçăна унта çавăтса илсе пырайман. Унсăр пуçне хыçалти ретсенче те апат-çимĕç сутма вырăнсем уйăрнă, анчах та унта сутуçăсем пыма хирĕç. Вĕсем çакăнта килменнине ăнланма пулать, хыçал еннелле халăх ытла çӳремест.

**– Санитари нормипе килĕшӳллĕн пасар администрацийĕн сутуçăсене санитари тасалăхĕпе тивĕçтермелле. Картишĕнче çакна курма пулать-и?**

– Ку енĕпе пирĕн яланах йĕрккелĕ пулнă, саккуна пăхăнса ĕçленĕ. Шалта апат-çимĕç сутнă çĕрте те, картишĕнче те сутуçăсене тасалăх енчен тивĕçтернĕ, алă çумалли ятарлă вырăн туса панă. Ку енĕпе пире тивĕçлĕ органсем тĕрĕслесех тăраççĕ.

**– Хушма хуçалăхра туса илнĕ продукципе суту тăвакансен вырăн укçи пысăк пулни вĕсене çул айккинелле хăваламасть-и?**

– Хушма хуçалăхра туса илнĕ продукци сутакансен вара вырăн укçи тĕлĕшпе пăшăрханма кирлĕ мар, вĕсенчен укçа илместпĕр. Килсе сутчăр, тавар туянаканшăн та, сутуçăшăн та меллĕ пултăр. Чи пĕлтерĕшли вара йĕркене, тасалăха пăхăнни пулмалла.

**– «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕ еннелле тухакан çул айккинчи сутуçăсем пирки мĕн калама пултаратăр?**

– Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕн Н.И. Никитин ятарлă хушăвĕпе килĕшӳллĕн унта йывăç, калча сутма пысăках мар вырăн уйăрнă, суту-илӳ ирттерме ирĕк панă. Анчах та унта хăш чухне апат-çимĕç те сутkалаççĕ. Апат-çимĕç витрине вара ятарлă ларкăч çине лартса сутассине саккун хирĕçлемест, анчах та хамăр утакан çул-йĕр çине хурса сутмалла мар. Паллах, ятарлă сĕтел çинчен туянни тĕрĕсрех ĕнтĕ.

Çитес вăхăтра пасарта хушма павильонсем тăвассипе тимлеме палăртнă, çавна май хăш-пĕр улшăну пулĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА** калаçнă.

**Сăн ӳкерчĕкре: сĕтел çинчи апат-çимĕçе туянма яланах аванрах.**

Ыйту-хурав

## Кĕл чечеке мĕн пулчĕ?

**Манăн пахчари кĕл чечек тĕмми çулла илемлĕ ешеретчĕ, халĕ çаралса юлчĕ, çулçи тăкăнса пĕтрĕ. Мĕн тумалла-ши?**

**Вера.**
Калайкасси ялĕ.

Сирĕн чечек тĕммине чир-чĕр имшерлетет. Çулçă çинче хура пăнчăсем пулаççĕ, каярахпа саралаççĕ те тăкăнаççĕ. Çак чир вара çуркуннех пуçланнă. Халĕ ытларах аталаннипе тĕмме хавшатнă.

Чи малтан чир тĕммĕн аялти пайĕнче пуçланать, майĕпен çӳле хăпарать. Çакă вăл – кăмпа чирĕ ернин палли. Унăн вăрлăхĕсем тăкăннă çулçăсем çинче тата чечек туни çинче аванах хĕл каçаççĕ. Çавăнпа та тĕмĕ таврашĕнчи çулçăна пуçтарса илмелле, çунтармалла.

Кĕл чечеке хĕле хатĕрленĕ тапхăрта тĕмĕ çинчи мĕн пур çулçăна татса илмелле, хыççăн тĕмĕне 3 процентлă пăхăр е тимĕр купоросĕпе сирпĕтмелле. 10 литр шыв çине 30 грамм чухлĕ препарат кирлĕ. Чирĕн малтанхи паллисем пулсанах ӳсен-тăрана çӳлерех асăннă препаратсемпе е Ридомил-голд препаратпа сирпĕтмелле.

**С. ШАПОШНИКОВА.**
Кашмаш ялĕ.

Сире пĕлме

## Мĕнле çывăрмалла?

– Медицина ĕçченĕсем çапла пĕтĕмлетеççĕ: сулăм çинче çывăрмалла. Çапла тусан сывлăха та, илеме те упраса хăварма пулать.

– Хырăм çинче çывăрсан шăк хăмпи хĕсĕнет. Сĕт парĕ пирки те çавнах каламалла.

– Пĕрмай хырăм çинче çывăрсан пит пĕркеленчĕкесемпе витĕнет. Вăхăт иртнĕçемĕн вĕсем тарăнланаççĕ.

Ялти сумлă ватăсем

## «Килĕшӳллĕ пурăннипе çуклăха туймарăмăр»

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1 стр.).**

– 54 çул пурăнатпăр ĕнтĕ кунта. Çур ĕмĕр ытла çак кĕтесе хăт кĕртес тесе пурăнтăмăр. Мĕн туни паян куç умĕнче, – терĕ мана хирĕç тухнă кил хуçи арăмĕ Екатерина Ивановна сăпайлăн та мухтанмасăр. Хампа паллаштарсан тĕпеле иртрĕмĕр те, пирĕн патăмăра кил хуçи Антон Архипович кăштăртатса тухрĕ. «Юн вылять, анчах утма йывăртарах. Çамрăкла сивве-ăшша пăхмасăр ĕçленисем пырса тытрĕç пуль», – питрен кулă тартмасăр пуплерĕ кил хуçи сĕтел хушшине вырнаçса.

Манăн çĕнĕ пĕлĕшсен хуçалăхĕнче сумалли икĕ ĕне, çуллен майлах икшер вăкăр, 3-4 пуç сысна, хурсемпе чăхсем йышлă тытнине, тупăшпа тĕллевлĕ усă курсах кил-çурт çавăрнине ял çыннисем пытармаççĕ. Çавăнпах ялти ватăсем ачисемпе мăнукĕсене Архиповсенчен тĕслĕх илме сĕннине ăнланма пулать.

Хресчен çемйинче çуралса ӳснĕ Антонпа Кĕтерин та ачаллах çĕр ĕçне пурнăç тыткăчи вырăнне хунă. Çамрăклах ĕçе кӳлĕннĕскерсем колхозсем тунă вăхăта та, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин çулĕсене те, вăрçă хыççăн çĕр-шыва ура çине тăратнине те халăхпа пĕрле тӳсĕмлĕн чăтса ирттернĕ. «Пире уйăрăммăн йывăр пулман», – терĕç аслă (ватă теес килмест) юлташăмсем çав çулсене епле чăтса ирттерни пирки ыйтсан.

Шурча хĕрĕ шкулта 7 класс вĕреннĕ хыççăн колхозра сысна пăхнă, ĕне сунă. Вăрçă чарăннă хыççăн Кĕтерин укçа тума йăлăма вăрман касма тухса каять. Шăпа çакăнта тĕл пултарнă та вĕсене Антонпа иккĕшне. 1957 çулхи çĕртме уйăхĕнче хут уйăрттарсан çулталăкран çамрăксен йăлăмрах ача çуралать.

...Нумай çул иртрĕ унтанпа. Мăшăр икĕ ывăл çуратса пурнăç çулĕ çине кăларнă. Çак хушăра мăнакка К. Иванов яч. хис. хуçалăхра уй-хирте те, гараж дежурнăйĕнче те, хуçалăх кантурĕнче техникăра та, радиоузелпа хыпарсем пĕлтернĕ çĕрте те, ветеринари участокĕнче те, почтальонкăра та тимленĕ. Нихăш ĕçре те ятне яман.

– Тавах мăшăрăма. Вăл ĕçе тиркеменни мана тăтăш хавхалану паратчĕ. Пирĕн çемьере эрех ĕçсе ĕçе тухманни, вăл е ку ĕçе тиркесе айккинелле пăрăнни, ывăлсене ĕç суйлама вĕрентни пулман. Килĕштерсе пурăннă. Çавăнпа умри йывăрлăхсене те çĕнтернĕ, – калаçăва хутшăнчĕ Антон Архипович.

Кил хуçи 1929 çулхи кăрлачăн 23-мĕшĕнче 3 ачаллă çемьере çуралнă. Чиркӳ ĕçченĕсен çемйинче кун çути курнăскер 4 класс пĕтерсенех ял кĕтĕве пăхма ĕçе кӳлĕннĕ. Çак ĕçренех салтака кайнă. Священниксен çемйинче ӳснĕскер совет çарĕнчен таврăнсан тин колхоза кĕнĕ. Ял хуçалăхĕнчи нимĕнле ĕçрен те пăрăнманскер 11 çул çурă районти пушар хуралĕнче те службăра тăнă.

– Тар юхтарса тунă пурлăха сыхласси, май пур таран упраса хăварасси маншăн питĕ пĕлтерĕшлĕ ĕçчĕ. Çавăнпа пушар хуралĕнче ĕçленĕ вăхăтра профилактика ыйтăвĕсемпе ялта калаçусем нумай ирттереттĕм, – аса илчĕ Антон Архипович. Пурăна-киле династи мелĕпе пушар хуралĕнчи хăйĕн ĕçне аслă ывăлĕ Слава малалла тăсни пирки те асăнчĕ вăл.

Тивĕçлĕ канура та ĕнерхи чиркӳ ачи колхоз ĕçĕнчен пăрăнман. Сысна ферминче кочегарта вăй хунă, темиçе çул фермăра юсавçă пулса тимленĕ.

– Пурнăç йывăр теççĕ. Пулнă та пулĕ. Тен паян та йывăрлăхсем пурах. Анчах эпир хамăр пурнăçра йывăрлăхсене сисмен. Ĕçлес пулать. Ĕçпе хутăш йывăрлăх та сисĕнмест, – терĕ мучи мăнакка çине ăшшăн тинкерсе.

Питре йăваш кулă палăртса Кĕтерин мăнакка та пашăмра юлмарĕ:

– Каласа панинчен ăнлантăр пулĕ, эпир пуян çынсем пулман. Анчах иртен пуçласа каçчен ĕçленĕ те çуккине те туйман. Çук тесе ĕç пăрахса ларман. Çакăнтан тухать те пулĕ ĕнтĕ вăл вăрăм пурнăç тымарĕ, çамрăк кунсен хунавĕ, – терĕ Екатерина Ивановна тĕл пулу пуçламăшĕнчи калаçу патне таврăнса.

**А. БЕЛОВ.**

Сад-пахчаçăн кулленхи календарĕ

# Илемлĕ юпа уйăхĕ

Халăх сăмахлăхĕнче юпа уйăхĕ пирки ытарлă каласем нумай. Çут çанталăкăн çак тапхăрĕ – ылтăн кĕркуннепе хура кĕркунне тĕл пулнă вăхăт. Сивĕ кунсем ытларах пулаççĕ, тăм ӳкме тытăнать. Çулçă тăкăннă май çаралнă улмуççисемпе çырла тĕммисем çинче сыхланса юлнă сăтăрçăсене, çĕрсе кайнă çимĕçсене асăрхама çăмăл. Вĕсене паянах пуçтарса тĕп тумалла.

Ăста пахчаçăн паян сад-пахчаран кĕме вăхăт çук. Авăн уйăхĕнче тислĕк тăкма ĕлкĕреймен пулсан юпа уйăхĕнче те ăна тума эсир каях юлман-ха. Юр айне укроп, шпинат, редис, сухан, ыхра, кишĕр, сельдерей акса-лартса хăварма йăрансем хатĕрлемелле.

**Юпа уйăхĕн 1-мĕшĕ.** Йывăççсемпе тĕмĕсене типĕ туратсенчен касса иртме ăнăçлă кун. Хăмла çырлине хĕл валли авса хумалла. Пахча çимĕçсене тăварлама тата консервлама меллĕ.

**Юпа уйăхĕн 1–3-мĕшĕсем.** Йывăççсемпе çырла тĕммисенчен типнĕ туратсене иртмелле. Нумай çул ӳсекен чечексене йывăç кĕрпипе, торфпа т. ыт. те хĕл валли витсе хумалла. Кăшлакан чĕр чунсем валли наркăмăш хурса тухмалла.

**Юпа уйăхĕн 3–5-мĕшĕсем.** Юр айĕнче хĕл каçмалли пахча çимĕçе тата хĕл сиввине чăтăмлă пĕр çул ӳсекен чечек вăррисене акмалла. Купăста йӳçĕтме меллĕ кунсем.

**Юпа уйăхĕн 5–8-мĕшĕсем.** Лартма юрăхсăр кунсем. Нумай çул ӳсекен чечексене хĕл каçма витмелле.

**Юпа уйăхĕн 8–10-мĕшĕсем.** Йывăççсемпе çырла тĕммисене пачах касса иртме юрамасть. Пӳлĕмри условисенче суханпа ыхра лартма юрать. Кăшлакан чĕр чунсем валли наркăмăш хурса тухмалла.

**Юпа уйăхĕн 10–11-мĕшĕсем.** Çĕр çырлине, чечексемпе декоративлă ӳсен-тăрана сивĕрен картламалла. Ăпăр-тапăра пуçтарса çунтармалла. Теплицăсене çуркунне валли хатĕрлемелле.

**Юпа уйăхĕн 11–13-мĕшĕсем.** Нимĕн те акма-лартма, касса иртме юрамасть. Уйăх тулнă вăхăт пулнăран халăх сăнавне шута илсе (тулли уйăхра йӳçĕтнĕ купăста çемçе пулать) купăста йӳçĕтмелле.

**Юпа уйăхĕн 13–15-мĕшĕсем.** Çĕр çырлине, чечексемпе декоративлă ӳсен-тăрана сивĕрен картламалла. Çуркунне петрушкăпа сельдерей симĕсле çиме акса хăвармалла.

**Юпа уйăхĕн 15–18-мĕшĕсем.** Пӳлĕмри чечексене шăварма тата апатлантарма мелсĕр кунсем. Сивех мар пулсан жимолость, крыжовник, хурлăхан тĕммисене касса иртни ытлашши пулмасть. Путвалсемпе нӳхрепсене упрама хунă çимĕçсене тĕрĕслемелле.

**Юпа уйăхĕн 18–20-мĕшĕсем.** Çамрăк йывăççсен туратсене шпагатпа кĕлтене пухса çыхмалла. Чечексемпе декоративлă ӳсен-тăрана сивĕрен картламалла. Шурă пуçлă купăстана йӳçĕтмелле, пан улмипе грушăсене консервламалла тата типĕтмелле.

**Юпа уйăхĕн 20–22-мĕшĕсем.** Пахчара юлнă ӳсен-тăрана йăлтах пуçтарса кĕртмелле. Симĕсле çиме пӳлĕмре ыхра, сухан, ытти çимĕçсене лартмалла.

**Юпа уйăхĕн 22–24-мĕшĕсем.** Çĕр сивви 2–3 градуса çитме пултарать. Çавна май сивве тӳсĕмлĕ пĕр çул ӳсекен чечексене акма юрать. Кая юлса пулакан купăстана касмалла. Палан консервлама пулать. Купăста йӳçĕтме меллĕ тапхăр.

**Юпа уйăхĕн 24–25-мĕшĕсем.** Сывлăш температури 5–8 градус сивĕ тăрать пулсан роза тĕммисене хĕл каçма витмелле.

**Юпа уйăхĕн 25–27-мĕшĕсем.** Çĕнĕ уйăх. Нимĕн те касма, куçарса лартма, лартма юрамасть.

**Юпа уйăхĕн 27–28-мĕшĕсем.** Пӳлĕмре кресс-салат, симĕсле çиме çулçăллă горчица акмалла. Пӳлĕмри чечексене лартма та, куçарса лартма та юрăхлă.

**Юпа уйăхĕн 28–30-мĕшĕсем.** Садри йывăççсемпе тĕмсене типнĕ туратсенчен иртмелле. Нумай çул ӳсекен чечексене хĕл каçма йывăç кĕрпипе, торфпа витме ан манăр.

**Юпа уйăхĕн 30–31-мĕшĕсем.** Пӳлĕмре апатра симĕсле усă курма ыхра, сухан лартсан ӳкĕнмелле пулмĕ. Купăста йӳçĕтме меллĕ кунсем.

